Ж К95.2
В38
Ж-80112



# ВЕСТНИК

## ЧЕБОКСАРСКОГО ФИЛИАЛА МОСКОВСКОГО ГОСУДАРСТВЕННОГО ГУМАНИТАРНОГО УНИВЕРСИТЕТА ИМЕНИ М.А. ШОЛОХОВА

№ 5
Москва - Чебоксары
2008

ского языка и Комиссии по использованию государственных языков при администрации г. Чебоксары. А.П. Хузангай – руководитель отраслевой редакции и автор ряда статей «Краткой чувашской энциклопедии» (2001) и «Чувашской энциклопедии».

Ещё одним свидетельством авторитета Атнера Петровича в научной среде явилось включение его в состав Бюро недавно созданного Российского комитета тюркологов при Отделении историко-филологических наук РАН.

А.П. Хузангай – лауреат премий Союза журналистов Латвии (1987), журнала «Дружба народов» (1987), Чувашского комсомола им. М.Сеспеля (1989), премии и медали В.Митты (1998), премии им. И.Я. Яковлева (2002). Он награжден Почётной грамотой Чувашской Республики, Почётными грамотами Верховного Совета и Государственного Совета нашей республики.

***Портнов К.П.***

## «ПУРИНЧЕН ТЕ ЛАЙӐХРАХ ӐНА ӐНЛАННӐ ТАТА ПУРИНЧЕН ТЕ ЫТЛАРАХ УНШӐН ТӐРӐШНӐ...»

Паян пирӗн Çутта калараканамӑр, Аслӑ вӗрентекенӗмӗр, Патриархӑмӑр Иван Яковлевич Яковлев чӗрӗлсе тӑна пулсан тӗлӗннӗ пулӗччӗ. Вӑл хайӗн пурнӑçӗ тӑршшӗпех ӗçленӗ, тӑрӑшнӑ, ӗмӗтленнӗ ӗçӗ-шухӑшӗ-тӗллевӗ чӑн пурнӑçа кӗнӗ. Чӑваш çутта тухрӗ. Чӑваш ачи кӑткӑс наукӑсене çӗç мар, тӗнче уçлӑхне те парӑнтарчӗ. Иван Яковлевич пултаруллӑ чӑваш ачисене акӑлчан университечӗсене – Кембриджпа Оксфорда – яма ӗмӗтленнӗ. Халӗ вара ют çӗршывсенчи çамрӑксем, унти ӑсчахсем хайсем Чӑваш Енри университетсене ӑс пухма, паха опыта вӗренме килеççӗ.

Чӑваш халӑхӗ хайӗн чӗлхине “Чӗлхе саккунӗпе” хӳтӗлет. Вӑл çеç-и – ятарласа тунӑ наци уявӗ пур – Чӗлхе кунӗ. Ӑна шӑпах Иван Яковлевич çуралнӑ кун – ака уйахӗн 25-мӗшӗнче паллӑ тӑватпӑр. Чӑвашӑн пӗтӗм пурнӑçӗ И.Я. Яковлевпа çыхӑннӑ. Иртни те, паянхи те, пуласлӑхӗ те. Паян кашни чӑваш çапла шутлать. Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.В. Федоров Чӑваш наци конгресӗн Ман Канашӗн пӗлтӗрхи пухӑвӗнче Аслӑ вӗрентекенӗмӗре “Яковлева аса илни кӗлӗ хӑватлӑхне чӗннипе тан”, – тесе каларӗ. Иван Яковлевич тунӑ ӗçсемпе, вӑл каланӑ, сӗннӗ шухӑшсемпе паян та туллин уса курма пулать. Патриархӑмӑран Халалӗ паян та чӑваша çул-йӗр кӑтартса тӑрать.

Анчах та пур чухне те паянхи пек хакланӑ, çӳле хупнӑ-и эпир Иван Яковлевича. Çук çав. Çакна йышанма тем пек йывӑр, намӑс пулсан та йышӑнмаллах. Хай пурӑннӑ чухне те, çӗре кӗнӗ хыççӑн та И.Я. Яковлев ятне варалама пахакансем те, унан ӗçӗсене пачах та шута илмен, пачах урахла “сиенлӗ” тесе хакланӑ вахатсем те пулнӑ. Тӗрлӗ салтав шыранӑ – чиркӳпе туслӑ пулни те, Библие хаклани те, патша влаçӗпе пӗр чӗлхе тупма

пултарни те, “аслă” вырăссемпе çыхăну тытни те, вырăс культурине мала хурса ăна алла илме тăрăшни те... Çапах та вĕсем хайсен хура ĕçне тăвайман. Яковлев ĕçне – чăваш халăхне çĕклессине, аталантарассине – чунран паранна, ăна малалла та туса пырас тесе тĕрлĕ йывăрлăхпа чăрмава тата хайсене хĕснине пăхмасăр ăнталнă, тăрăшнă. И.Я. Яковлев ĕçĕсене, шухăшĕсене халăх патне çитерес, вĕсене упраса хăварас, çитĕнекен ăрава туллин паллаштарас тĕлĕшпе вун-вун, çĕр-çĕр харсăр чăваш ĕçлет. Вĕсен шутĕнче И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Л.П. Кураковпа унти И.Я. Яковлев ячĕллĕ Ăслăлăхпа тĕпчев инстнтучĕн директорĕ Н.Г. Красновпа И.В. Мукина ăсчах. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ те Патриархăмăрăн ятне чаннипех çӳлте тытса пырать. Унăн ректорĕ Г.Н. Григорьев, Иван Яковлевич ячĕпе ятарласа йĕркеленĕ кафедра – якволевоведени кафедирн ертӳçи Т.Н. Петрова профессор тата Л.В. Кузнецова, А.В. Земляков, М.Г. Харитонов профессорсем И.Я. Яковлев çинчен çĕнĕрен те çĕнĕ тĕпчевсем йĕркелеççĕ, çыраççĕ. Экономикăпа менеджментăн Шупашкарти институчĕн директорне, республикăри И.Я. Яковлев фончĕн председательне Н.Г. Саврукова епле манăн тата. Аслă вĕрентекенĕмĕрĕн еткерне халăх патне çитерес тесе нумай ĕç тăвать вăл. Тав вĕсене. Çапах та Çутта кăларакан ĕçне чăннипех те хаклас, упраса хăварас, халăх патне çитерес енĕпе малти ретре тăракансене уйрăмах ырăпа асăнас килет. Пĕрремĕшĕ – Алексей Васильевич Рекеев. Вăл Иван Яковлев шкулĕн вĕренекенĕ. Кайран вара – Иван Яковлевичăн пулăшаканĕ. 1908 çулта шăпах Алексей Васильевич Чĕмпĕр чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине çӳллĕ шайра йĕркелесе яраканĕ пулнă. Çакăншăн ăна Иван Яковлевич ӳпкеленĕ те, хайĕн çырăвĕнче “ĕçри çитĕнӳсене шăв-шав çĕклесе мар, сăпайлă та çине тăрса тăвакан кулленхи ĕçпе тумалла”, – тесе хирĕçленĕ. Юбиляр хай хирĕçленĕ пулин те Алексей Васильевич уява Раççей шайĕпе ирттернĕ. Вырăссен паллă педагогĕ Н.И. Колосов И.Я. Яковлевăн тулли биографине пĕрремĕш хут çырса пана. Унта вăл ăна халăхăн мухтавĕ, мăнаçлăхĕ, Аслă çутта кăларакан тесе хаклана. Урахла каласан, шăпах çав уявра, çавăн чухне пуçласа Иван Яковлевича тĕнче шайĕнчи наци генийĕ тесе асăнна.

Пирĕн Аслă ăсчахăмăр Геннадий Никандрович Волков И.Я. Яковлева паянхи шая çитернине темиçе утăм çине пайлать. Пĕрремĕшне А.В. Рекеев туна пулсан, иккĕмĕшне вăл В.И. Ленина асăнать. 1918 çулта РСФСР Совнарком Председателĕ Чĕмпĕре янă телеграмма Яковлев пурнăçĕн ĕçне аркатасран сыхласа хăварнă. Виççĕмĕш утăм – И.Я. Яковлев 80 çул тултарнине халаллаcа Мускавра ирттернĕ юбилей пухăвĕ, А.В. Луначарский унта доклад тунă май Иван Яковлевича нацин аталанупа культура çул пуçĕ, чăваш шкулĕн ĕçне – пур халăхсемшĕн те ырă тĕслĕх пул-

нине ҫирӗплетсе пана. Ҫаван чухнех И.Я. Яковлев ӗҫне пур енлӗн ҫырса катартнӑ М.П. Петрован «Тинех–пин» кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Чӑваш ҫырулахне йӗркелесе яракан ҫинчен пӗрремӗш документлӑ фильм кун ҫути курнӑ.

Шел те, 1928 ҫул хыҫҫӑн И.Я. Яковлев пирки хура "ӗҫсем" пуҫланна. Кинофильма катартма чарнӑ. Элек хыҫҫӑн элек. Сӑмаххӑн ҫеҫ мар – Пысӑк Совет Энциклопедире те И.Я. Яковлев пирки элек ҫапӑнса тухнӑ. "Чӑваш халахӗ И.В. Сталин патне ҫырнӑ ҫырура" Иван Яковлевича никам та мар "патша тарҫи" тенӗ. И.Я. Яковлев вӗренекенӗсем репрессие лекнӗ. Чылайӑшӗ вилӗмрен те ҫалӑнса юлайман. Вӗсен шутӗнче И.Я. Яковлев ӗҫне тӗплӗн тӗпчеме пуҫлана М.П. Петров та.

Ҫапах та "хура" кунсен И.Я. Яковлевӑн халахшӑн тунӑ пархатарлӑ ӗҫӗсен умӗнчен чакмах тивнӗ. 1948 ҫула Г.Н. Волков Яковлев патне тунӑ 4-мӗш утӑм тесе палӑртать. Ҫав ҫул унӑн ывӑлӗн А.И. Яковлевӑн "Иван Яковлевич Яковлев" кӗнеки пичетленсе тухать. Ӑна пичете И.Я. Яковлевӑн мӑнукӗ О.А. Яковлева хатӗрленӗ. И.Я. Яковлева халалласа Шупашкарта наука сессийӗ иртнӗ, Чӑваш педагогика институтӗнче мемориал выставки «Яковлевӑн паянхи музейӗн прототипӗ» уҫална.

Пиллӗкмӗш утӑм – 1958 ҫулта Чӑваш педагогика институтне Иван Яковлевич Яковлев ятне пани. В.Д. Димитриев асчах пуҫарнипе И.Я. Яковлев ӗҫӗсен 4 томлӑ пуххине пичетлесе каларма хатӗрленме пуҫланӑ. Пӗрремӗш томне хатӗрлесе ҫитернӗ те пулна, анчах та парти обкоме хушнипе шрифтсене салатса парахна, пичете хатӗрлеме чарнӑ.

Апла пулин те ют ҫӗршывсенче – Болгарире, Чехословакире, Польшӑра тата ытти ҫӗрте И.Я. Яковлев пирки статья хыҫҫӑн статья пичетленнӗ. И.Я. Яковлев сочиненийӗсене Украинари педагогика историйӗн хрестоматине кӗртнӗ.

Ытти утӑма та асанать Г.Н. Волков. Ҫапах та чи вирлӗ, чи витӗмлӗ, чи историллӗ утӑм – И.Я. Яковлев 150 ҫул тултарнине паллӑ туни. Чӑваш Республикин Президенчӗн Н.В. Федорован Указӗпе палӑртнӑ Яковлев ҫултаӑкне. Чи пӗлтерӗшли – Н.В. Федоров халиччен ҫирӗппӗн калама хаяйман лозунга – "Малалла, Яковлев патне" – уҫамлӑн чӗнни. Чӑваш Ен ӳсӗмӗсене, пуласлахне Президент Яковлевпа ҫыхӑнтарнӑ. "Мана уйрӑмах Президентӑн Яковлевла пафосӗ килӗшрӗ, – тет Г.Н. Волков – Иван Яковлевич Яковлев пек педагог пур халӑх асла халӑх пулмасар тӑма пултараймасть".

Ҫапах та, ман шутпа, Яковлев патне тунӑ сулмаклӑ утӑмсенчен пӗри, ҫитменнине чи витӗмли, Геннадий Никандрович Волков тунӑ утӑм. Сахалтан та 100 ытла ӗҫ ҫырнӑ вӑл И.Я. Яковлев пирки. Ҫитменнине кашниех тӗплӗн, пур енлӗн тишкернӗскерсем. Тӗнчене, планета ҫинчи вун-вун ҫӗршыв ҫыннине чӑвашсен Асла Патриархӗпе паллаштараканӗ те вӑлах. Кӗнекере те, статьяра та, конференцисене хутшӑнса та. Тепӗр тесен, мӗн ӗнентеретӗп. 1972 ҫулхи

юпан 31-мӗшӗнче И.Я. Яковлеван ывӑлӗпе мӑнуке И.А. Яковлевпа О.А. Яковлева ала пусса Геннадий Никандровича пана Хисеп хучӗ ҫине ҫырниех пӗлтерӗшлӗ: "Пирӗн шутпа, пирӗн аттен, асаттен – чӑваш халӑхне ҫутта кӑлараканӗн Иван Яковлевич Яковлеван биографине, идеологине, ӗҫне тӗпчекенсенчен, унан идейисене пропагандалас тата ӑна ӗмӗрлӗхех асра хӑварас тесе пуринчен те лайӑхрах ӑна ӑнланнӑ тата пуринчен те ытларах уншӑн тӑрӑшна ҫын – Геннадий Никандрович Волков".

Пирӗн Патриархамӑран чи ыра енӗ вӑл – мӗн шухӑшласа хунине вӗҫне ҫитерме тӑрӑшни, йывӑрлӑхсемпе чӑрмавсем умӗнче пуҫ усманни. Г.Н. Волков та ҫак пахалӑхсене унран вӗреннӗ. 1971 ҫулхи ҫӳкӗн 11-мӗшӗнче Яковлев ҫырулахӗ 100 ҫул ҫитнине халаллана наука конференцийӗнче Г.Н. Волков "Малалла, Яковлев патне!" лозунг тӑратса пурне те тӗлӗнтерет. "Яковлев патне тени, малалла мар, каялла", – хирӗҫлеҫҫӗ ӑна. КПСС обкомӗн бюровӗн йышӑнӑвӗпе Волкова Чӑваш Республикинче И.Я. Яковлев ӗҫӗсене тӗпчеме чарса лартаҫҫӗ. Геннадий Никандровичӑн ирӗксӗрех Шупашкартан Мускава тухса кайма тивет. Анчах та пуҫанна ӗҫе пӑрахмасть, элек умӗнче пуҫ усмасть – тата та ҫине тӑрса, ҫӗнӗ вайпа ӗҫлеме пуҫлать. Ячӗ тӗнчипех саралать.

Кам чӑваш халӑхӗн пурнаҫӗпе кӑсакланать, кам унан иртнӗ ӗмӗрӗсемпе пуласлӑхӗ пирки шухӑшлать, чӑвашлӑхшӑн чунне ыраттарать – вӑл И.Я. Яковлевпа Н.В. Никольский, Г.Н. Волков ячӗсене асӑнмасӑр иртеймест.

*Атлай Л.*

***Ӑшӑ кун хӗвелӗпе тулса ларнӑ Чӑвашлӑх Ҫӑлтӑрлӑхне чӗмсӗр пӗлӗтсенчен упракан, ӑна виҫе тӗрлӗ юратупа (ачасене юратмалла, ӗҫе юратмалла тата Тӑван ҫӗршыва юратмалла!) татса пама хавхаланса чӗнекен Педагогикӑри Нобель премине чӑннипех тивӗҫлӗ вӗрентӳҫӗ-сапарлӑхҫӑ, улӑпҫӑ-энциклопедист тата кашни чӑваш ҫыннин е уйрӑм халӑхӑн шӑпине куллен шур сухалҫӑ пек шухӑшласа ӑшӑтакан, тӗреклентерекен, вӑй паракан тӗнчипех ырӑ ят-сум илнӗ асла елчӗкҫӗ (е Г.Н.Волков академика 80-ҫулхи юбилейӗпе саламлани)***

Ялан телей пӗрчисене тӗрлӗ енчен асамлан ҫупӑрласа кӗтекен Этем Чунӗ-Камалӗ – ирӗклӗхпе тулса ларнӑ пирӗн космос-галактика пекех – вӗҫӗ-хӗррисӗр... Ҫав шутласа та илейми вӗҫсӗрлӗхре чӑвашлӑхан авалтанах килекен масмакла-чӗнтӗрлӗ арки пулни шухӑшамӑрсене татах та кармаштарать, пин-пин ҫалтӑрсем шӑтаклана тӳпере астӑвам шӑплахӗпе пӗлсе уса курса малалла хастарланса-патварланса утма хистекен хамӑрӑн ҫута тивлет пулмаллине аса илтерет.